Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

51 (7793) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи утă (июль) уйăхĕн 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çăкăр ăстисем

**Вĕсем ĕçре ырă ятлă**



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Людмила Витальевна Звонковăпа (сулахайри) Елена Кузьминична Васильева хăйсен ĕç пурнăçне пĕтĕмпех Муркаш райповĕн производствипе çыхăнтарнă. Людмила райпо тытăмĕнче 1986 çултанпа пулсан, 1990 çултанпа вăл пекарньăра вăй хурать. Паян хастар хĕрарăм çăкăр пĕçерессипе технолог пулса тимлет. Çăкăр пахалăхĕ хăйĕнчен пуçланнине ăнланать вăл. Ăнланать те ыттисенчен те çавнах ыйтать. Елена Кузьминична вара паян – «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн гендиректорăн çумĕ. «Çăкăр пĕçерес ĕçе пĕрре те вырăнта лартмастпăр. Акă паянхи кун Отарккăри тата Лантăшри пекарньăсенче пурĕ 59 тĕрлĕ продукци кăларатпăр. Вĕсене халăх кĕтет, çавăнпа сентре çинче те чылай выртмаççĕ вĕсем», – терĕ Е. Васильева.*

*Пекарньăсенче вăй хуракан 36 ĕçчен кăçалхи çур çулта 415 тонна (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 108,5 процент) çăкăр изделийĕсем пĕçерсе халăх патне çитернĕ.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Симĕс ĕç çи**

## Хатĕр утă – 70,1 процент

Районти хуçалăхсенче курăксене çулса утă типĕтсе хатĕрлес ĕç анлă сарăлнă. Ĕнерхи кун тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене пĕтĕмпе 5052 гектар çинче (52,2 процент) çулма ĕлкĕрнĕ. «Волга», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче çак ĕçе вĕçленĕ. «Колос», «Картофель» агросоюз», «Рассвет» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче, С.К. Сретинский, В.В. Бархаткин, А.И. Толстов, А.В. Мерлов хресчен-фермер хуçалăхĕсенче те нумай çул ӳсекен курăксене çулса пĕтернĕ.

Утă пĕтĕмпе 3620 тонна (70,1 процент) янтăланă. Чкалов яч. хис. хуçалăх ку енĕпе плана 24 процент ирттерсе тултарнă. Çав вăхăтрах «Восток» хуçалăхра хатĕр утă 18 процент, Ильич яч. хис. хуçалăхра 13 процент, «Оринино» хуçалăхра 18 процент кăна.

«Восток», «Оринино», «Передовик», «Свобода», «Ударник», Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче сенаж хывма пуçăннă. Районĕпе сенаж 2213 тонна (26,1 процент) хывса хăварнă.

Ильич яч. хис., Ленин яч. хис. хуçалăхсенче силос хывас ĕç пуçăннă.

**Асăрханулăх**

## Тимлĕрех пулма ыйтатпăр

Çанталăк шăрăх тата çумăрсăр тăнă май Мари Республикинчи вăрман тăрăхĕсенче пушарсем алхасаççĕ. Çавна май Чăваш Республикин хăш-пĕр территорийĕсенче тĕтĕм тăрать. Сывлама йывăрри палăрать, çынсем медицина пулăшăвĕ ыйтнă тĕслĕхсем те пур. Пушарсене сӳнтерес ĕçе Раççей Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Бе-200 самолетне, икĕ Ми-8 вертолета, Мари Республикин пур пушар чаçĕсене тата çынсене явăçтарнă. Июнĕн 29-мĕшĕнче республикăн хăш-пĕр территорийĕсенче температура 30–32 градуса çитнĕ. Вăрмансенче пушар тухас хăрушлăх пысăк. Çумăр çумасть. Çавна май Чăваш Республикин чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе кирлĕ мерăсем йышăнма, граждансене Йошкар-Ола хули еннелле кайма тăхтаса тăма чĕнсе калать.

Чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухас хăрушлăх пулсан, Чăваш Республикин чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитетне оперативлă дежурнăй патне 63–88–64 телефонпа шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр. Факс: 63–89–32.

**В. ПЕТЬКОВ,**
**ЧР чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ.**

## Тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать

**Чĕнсе калани**

***Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, пур йышши харпăрлăхлă ял хуçалăх предприятийĕсен, хресчен тата фермер хуçалăхĕсен ертӳçисене, килти хушма хуçалăх ĕçченĕсене!***

Кăçалхи типĕ тата шăрăх çанталăк ял хуçалăх производствинче критикăлла лару-тăру туса хучĕ. Ку вăл çурхи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен, çĕр улмин, выльăх апачлĕх пулса тăракан пĕр çул тата нумай çул ӳсекен курăксен ӳсĕмĕшĕн тата аталанăвĕшĕн чăрмав кăларса тăратрĕ.

Çавна май «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») партин Муркаш районĕнчи вырăнти политканашĕ агропромышленность комплексĕн предприятийĕсене тата районта пурăнакансене чĕнсе калать. Хатĕрлесе хăварнă мĕн пур выльăх апачĕн ревизине туса ирттерес пулать. Выльăхсене хĕл каçарма тата çулла кĕтӳре çӳретнĕ тапхăр валли апат мĕн чухлĕ кирлĕ пулнине палăртмалла. Улăхсенче, çырма-çатрасенче, вăрман уçланкисенче, çул хĕррисемпе, усă курман çĕр пайĕсем çинче выльăх апачĕ хатĕрлессине йĕркелемелле.

Уйсене пăхса тухмалла тата çурхи тĕш тырă культурисем, выльăх апачлĕх акса хăварнă пĕр çул ӳсекен пучахлă, пучахлă тата пăрçа йышши курăк хутăшĕсем епле шайра пулнине палăртмалла. Пĕр çул ӳсекен курăксене пĕр тăхтаса тăмасăр утăлăх тата сенажлăх пухса кĕртмелле. Ӳсĕм тапхăрне те пăхса тăмалла мар. Хальхи çанталăк условийĕсенче пĕр çул ӳсекен курăксен пучах масси çине мар, курăк масси çине ытларах тимлĕх уйăрни тĕрĕсрех.

Пĕр çул ӳсекен курăксене пухса илнĕ лаптăксенче дисковани тата культиваци туса ирттерсе çĕре хатĕрленĕ хыççăн пĕр çул ӳсекен пучахлă, пучахлă тата пăрçа йышши культурăсен хутăшĕсене акса хăварас ĕçсене туса ирттермелле. Опыт кăтартса панă тăрăх çулла акса хăварнă çурхи пучахлă культурăсен тата курăксен хутăшĕсем симĕс масса япăх мар туса илме май параççĕ. Кĕрхи кунсенче майракаллă шултра выльăхсене ирттерех çитерме симĕс апатлăх ыраш акса хăварма юрать.

Обществăлла пур пĕрлешӳсене те выльăхсем валли апат хатĕрлессипе кирлĕ пулăшу пама чĕнсе калатпăр.

**Ю. ИВАНОВ,**
**«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи вырăнти политканашĕн секретарĕ.**

**ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе саламлатăп!

«Хаваслă ĕç – чун канăçĕ»,– теççĕ чăвашра. Ламран лама пирĕн авалхи халăх ĕмĕрĕн çак хаклăхĕсене куçарса пырать. Вĕсен тĕшшинче вара – туслăхпа ырă кăмăл, савăнăçра тата хуйхăра та пĕрле пулни, пĕр-пĕрне ăнланни, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма вĕренни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Умри задачăсене пĕрле татса парас пулать, пĕтĕм тĕнчепе пĕрле хальхи тата малашнехи пурнăçа йĕркелесе пымалла.

Чăваш Енре потребительсен кооперацине çирĕплетме сахал мар ĕç туса ирттереççĕ: суту-илӳ тата услугăсем паракан, обществăлла апатлану, производство, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисем аталанса пыраççĕ. Ял хуçалăх продукцине тата чĕр тавара сутăн илессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленеççĕ. Çавна палăртма кăмăллă: кăçалхи кĕркунне хăйĕн 90 çулне паллă тума хатĕрленекен Чăвашпотребсоюз нумай çул хушши пысăк ĕç пахалăхне кăтартса парать, экономика ăмăртăвĕнче Раççейри ытти регионсем хушшинче малти вырăнсене йышăнать.

Республикăри кооператорсене ырми-канми ĕçшĕн, ответлăхшăн тата чун хавалĕшĕн тав сăмахĕ калатăп. Пурне те малашне ĕçре ăнăçусем, энерги, çирĕп сывлăх, телей сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ КООПЕРАТОРСЕМ, ПАЙЩИКСЕМ ТАТА СУТУ-ИЛӲ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Эсир кунсерен халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе тимлетĕр. Паянхи кун кăларса тăратакан йывăрлăхсем умĕнче çухалса каймастăр, вĕсене çĕнтерсе пырса ура çинче çирĕп тăратăр: суту-илӳ, обществăлла апатлану предприятийĕсене тĕплĕн юсама, çĕнĕ объектсене хута яма пултаратăр. Çапла майпа районта пурăнакансене çĕнĕ ĕç вырăнĕсемпе те тивĕçтеретĕр. Çулсеренех эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех, суту-илӳ культурин шайĕ те хăпарсах пыраççĕ. Çакă хăех эсир хăвăрăн ĕçĕре юратнине, тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине кăтартса парать. Çулсеренех эсир Центросоюзăн Пĕтĕм Раççейри тата Чăвашпотребсоюзăн республикăри ăмăртăвĕсенче малти вырăнсене йышăнни, çак чикĕрен чакманни района чыс кӳрет. Сире районăн экономика аталанăвĕпе социаллă пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнăшăн тав тăватăп. Малашне те ӳсĕм çулĕпе çирĕппĕн утма, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ăнăçусем сунатăп.

Сывлăхăр чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Çемьере килĕшӳпе тату пурнăç хуçаланччăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Районăн экономикăпа социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, нумай çул хушши вырăнти самоуправлени органĕсенче тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи июнĕн 8-мĕшĕнчи 447-А № йышăнăвĕпе Чăваш Республикинчи «Росгосстрах» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Муркашри страховани пайĕн пуçлăхне **Валерий Иванович ВЯЗОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

**Саламлатпăр**

Юратнă аннене, çепĕç чунлă мамака, кăмăллă кукама, чи хаклă инкене, тараватлă аппана, хисеплĕ тăвана – Атапай ялĕнче пурăнакан **Ольга Константиновна ВОЛКОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Яланах пире ăс парса пулăшса пынăшăн, йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал панăшăн сан умра çĕре çити пуç таятпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир сана, чăнах та, çав тери, пĕтĕм кăмăлтан юрататпăр.

**Пысăк салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, Ивановсен, Медовсен, Волковсен, Бычковсен, Суворовсен, Вязовсен çемйисем.**



Юратнă аннене, кукамая, тăхлача – Муркаш салинче пурăнакан **Любовь Семеновна СТОЛЯРОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх сунатпăр. Пире çуратса ӳстернĕшĕн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн çĕре çити пуç таятпăр.

**Салампа: 2 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, Соловьевсен, Колбасовсен, Ефимовсен, Красновсен çемйисем, тăхлачипе хăтисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, хĕрĕме, аппана, юратнă мăшăра, аннене, ырă кăмăллă тăванăмăра – Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Римма Лазаревна МОКШАНОВĂНА** утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр. Телейпе ăнăçу яланах юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ хуçаланччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, хунямăшĕ, аппăшĕсем, пиччĕшĕсем, мăшăрĕ, хĕрĕсем, çывăх тăванĕсем.**

# «Çул-йĕр puринчен те тимлĕх ыйтать»

Паян – ГИБДД ĕçченĕсен кунĕ



*«Йĕркене пăсни акă мĕн патне илсе çитерет».*

*Çул-йĕр çинчи инкексене пула пирĕн çĕр-шывра çулсерен вуншар пин çыннăн пурнăçĕ сарăмсăр татăлать. Акă иртнĕ çул та ку хисеп вăтăр пин патнех çывхарчĕ. Пирĕн район территорийĕнче пулнă аварисенче вара пĕлтĕр 18 çын вилнĕ.*

***Кăçалхи хыçа юлнă тапхăрта лару-тăру мĕнлерех-ха? Çак тата ытти ыйтусемпе кăсăкланса районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн пуçлăхне В.И. ВОЛКОВ милици майорне тĕл пулăва чĕнтĕмĕр.***

**– Владимир Ильич, мĕнлерех лару-тăру паян пирĕн районти çул-йĕрсем çинче?**

– Çулталăк пуçланнăранпа ултă уйăх хыçа юлчĕ. Çак тапхăрта çулсем çинчи лару-тăру лăпкă пулмарĕ тесе каламалла. Ултă уйăхра пирĕн район территорийĕнче пурĕ 22 авари пулса иртрĕ. Танлаштарса пăхма: пĕлтĕрхи çак тапхăрта çулсем çинче пурĕ 23 инкек сиксе тухнăччĕ. Кăçал Мускав – Уфа çул çинче 9 инкек пулчĕ, республика пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче – 4, вырăнти çулсем çинче – 9.

Кăçалхи çур çулта тăхăр çыннăн пурнăçĕ çул çинчи хăрушсăрлăха пăхăнманнине пулах вăхăтсăр татăлчĕ, вăтăр виççĕн суранланчĕç.

(Вĕçĕ 6 стр.).

# Вăйăсем кăçал та çӳллĕ шайра иртрĕç



Республикăри çамрăк армеецсен 42-мĕш вăййисене иртнĕ кĕçнерни кун хупнă чухне Чăваш Республикин вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕн çумĕ В.В. Алексеев малашне çак вăйăсене тата та пахарах, интереслĕрех, туллирех ирттерме май пуррине пĕлтерчĕ. Çамрăк армеецсене вăйăсем вĕсленнĕ ятпа саламланă май Виктор Валерьевич ачасем вăйăсен малтанхи 2 кунĕнчех çанталăк кăларса тăратнă чăрмавсене те, конкурссенчи йывăрлăхсене те чыслăн чăтса ирттернине палăртрĕ.

– Çак Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă, Чăваш автономийĕ 90 çул тултарнă çулхи вăйăсене эсир яланах асра тытăр. Мĕншĕн тесен çак 6 кун хушшинче эсир пурнăç йывăрлăхĕсене çĕнтермеллин, туссемпе хутшăнма вĕренмеллин, пурнăçра ушкăнпа мĕнле пурăнмаллин чăн-чăн шкулĕ витĕр тухрăр, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăнасене Муркаш районĕнче пурăнакансен ячĕпе саламланă май.

Уявра мала тухнă командăсене чысларĕç. Муркаш шкулĕ çумĕнчи «Родина» çарпа патриотика клубĕ ытти клубсем хушшинче çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн ятарлă парнине вара Оринин шкулĕн команди тивĕçрĕ. Асăннă вăйăсем кăçал Учитель çулталăкĕнче иртнĕ май «Учитель-наставник» ятпа çĕнĕ конкурс пулчĕ. Вăйăсене хупнă чух унăн çĕнтерӳçисене, çавăн пекех «Зарницăпа» «Орленока» пĕрремĕш хут хутшăнакансене, хăйсен çуралнă кунĕсене çак 6 кун хушшинче паллă тунисене те чысларĕç. Вăрнарти çарпа патриотика клубĕн çапăçмалли мелсене кăтартса уçнă уяв Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин ятарлă отрячĕн çапăçу мелĕсене кăтартнипе тата Шупашкарти аэроклуб парашютисчĕсемпе Муркаш шкулĕн «Родина» çарпа патриотика клубĕн членĕсем-парашютисчĕсем парашютпа сикнипе вĕсленчĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Вăхăт нумаях юлмасть

2010 çулхи халăх çыравĕ

***Нумаях пулмасть Пĕтĕм Раççейри 2010 çулхи халăх çыравне ирттерессипе ĕçлекен районти комиссин ларăвĕ иртрĕ. Унта çак ответлă мероприятипе çыхăннă паянхи ыйтусене сӳтсе яврĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, хатĕрленӳ ĕçĕсем япăх пыраççĕ темелле мар. Çапах та хальхи экономика кризисĕн тапхăрĕнче ума тухса тăракан хушма йывăрлăхсем те пулаççех. Çавăнпа та халăх çыравне ирттерес енĕпе ĕçлекен пирĕн район уполномоченнăйĕпе А.С. ВОЛКОВПА тĕл пулнă май вĕсем пирки тĕплĕнрех чарăнса тăма ыйтрăм.***

– Унччен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, хальхи вăхăтра халăх çыравне хутшăнмаллисен спискине 36244 çынна кĕртнĕ. Çырав ирттерме районта çырав участокĕсем 6, инструктор участокĕсем 23, шутлав участокĕсем 91, стационарлă участоксем 12 туса хунă. Районĕпе пĕтĕмпе çырав, инструктор, шутлав участокĕсене пĕрлештернисем 6, инструктор тата шутлав участокĕсене пĕрлештернисем 10 ĕçлĕç.

Паянхи куна илес пулсан участоксем валли ĕçлеме вырăнсене пурне те тупса палăртнă, вĕсем пирки ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе килĕшсе татăлнă. Ял тăрăхĕсем тăрăх çырав, инструктор, шутлав тата стационар участокĕсем çак адрессемпе вырнаçнă: Уйкас Янасал ял тăрăхĕ – Васкассинчи вĕрентӳпе культура центрĕ, Мăн Сĕнтĕр – Мăн Сĕнтĕрти администраци çурчĕ, Ильинка – Тренккăри Культура çурчĕ, Катькас – Катькассинчи Культура çурчĕ, Муркаш – Муркашри касса пункчĕ, Москакасси – Москакассинчи Культура çурчĕ, Оринин – Патаккассинчи администраци çурчĕ, Çатракасси – Çатракассинчи библиотека, Турай – Турайри администраци çурчĕ, Хорнуй – Хорнуйри администраци çурчĕ, Чуманкасси – Чуманкассинчи Культура çурчĕ, Шетмĕпуç – Шетмĕпуç ялĕнчи библиотека, Юнкă – Юнкă ялĕнчи клуб, Йӳçкасси – Йӳçкасси ялĕнчи клуб, Ярапайкасси – Ярапайкасси ялĕнчи клуб, Ярославка – Ярославка ялĕнчи клуб.

2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен Правительство комиссийĕн йышăнăвĕпе çырав ирттерме пӳлĕмсем арендăна илме, вĕсене сыхлама, транспорт тата çыхăну услугисемпе тивĕçтерме каякан тăкаксене саплаштармалли нормăсене нормативсене кура çирĕплетнĕ. 2010 çулта пӳлĕмсене сыхлассипе çыхăннă тăкаксене туллин тивĕçтерессĕ: талăкĕпех дежурство тăнă чухне 340 тенкĕ чухлĕ. Пĕрлештернĕ участоксене 39 талăкшăн тата инструктор участокĕсене 33 талăкшăн. Çавна валли районĕпе пĕтĕмпе 191760 тенкĕ уйăрма пăхнă.

Çыхăну услугисен тӳлевне палăртнă чухне тариф планĕсене тĕпе хураççĕ. Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн министерстви тĕрĕслевлĕ цифрăна 12960 тенкĕ тесе палăртрĕ: пĕрлештернĕ участоксем валли талăкне 18 тенкĕ те 46 пус, 62 талăк валли 6868 тенкĕ те 62 пус; инструктор участокĕсем валли 33 талăкшăн 6092 тенкĕ.

Транспорт услугисемшĕн каякан тăкаксене пĕтĕмĕшлехи тăкаксен 18 проценчĕ чухлĕ палăртрăмăр. Кунта чи малтанах çунтармалли-сĕрмелли материалсемшĕн тӳлессине кĕртетпĕр. Транспорт услугисем валли пĕтĕмпе 264000 тенкĕ палăртса хунă. Ку вăл 6 çырав участокĕ валли 40 куншăн 1100-шер тенкĕ. Çурт-йĕр арендишĕн 5 процент чухлĕ уйăратпăр. Ку вăл кашни тăваткал метр пуçне 3 тенкĕ те 30 пуспа шутласан 46332 тенкĕпе танлашать. Арендăпа вăхăчĕ пĕрлештернĕ участоксем валли 62 талăк тата инструктор участокĕсем валли 33 талăк.

Паянхи куна Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хутшăнакансен малтанхи спискине палăртнă. Çак ĕçе вăхăтлăх хутшăнакансемпе гражданла право килĕшĕвĕсем тăватпăр. Килĕшӳсем çине патшалăх статистикин территори органĕн уполномоченнăйĕ тата ĕçе вăхăтлăх илекен алă пусаççĕ.

Çырав участокĕсен заведующийĕсем пулма вăхăтлăх ĕçченсене 2010 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 11-мĕшĕччenхи тапхăршăн 60 кунлăх йышăнатпăр. Çырав участокĕсен заведующийĕсем пулма опытлă çынсене суйласа илнĕ, вĕсенчен ытларахăшĕ çырав тата суйлав кампанийĕсене пĕр хут кăна мар хутшăннă. Инструкторсене 31 кунлăх (октябрĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 3-мĕшĕччен) йышăнатпăр. Тĕп çыравçăсем тата стационарлă участоксен çыравçисем октябрĕн 8-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 29-мĕшĕччен пĕтĕмпе 22 кун ĕçлеççĕ.

Ĕç графикĕпе килĕшӳллĕн çырав ĕçне хутшăнакансене вĕрентессине йĕркелетпĕр. Вĕсем çырав епле иртесси, документсене мĕнле йĕркепе тата хăш вăхăтра çырса хатĕрлесси пирки пĕлӳ илĕç. Çак ĕçсене ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă 2 çынна, вĕренӳ заведенийĕсем урлă 13 çынна, предприятисемпе организацисенчен тата учрежденисенчен 68 çынна, социаллă служба тата обществăлла организацисен ĕçченĕсене 7 çынна, ял тăрăхĕсен администрацийĕсен ĕçченĕсене 24 çынна, вăхăтлăх ĕçлеменнисене тата пенсионерсене 38 çынна явăçтаратпăр. Вăхăтлăх ĕçченсене 152 çын суйласа илмелле пулсан, çавăн чухлех хатĕрленĕ ĕнтĕ. Çыравпа çыхăннă ыйтусене пурне те вăхăтра татса пама тăрăшатпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Лару

# Пенси виçисем ӳсеççĕ

***Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ 2010 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене индексацилес, кăçалхи пĕрремĕш çулшăн харпăр хăйĕн сведенийĕсене йышăнма тытăнас тата страхланă çынсен лицевой счечĕсем пирки пĕлтернисене ярса парас ыйтусемпе селекторлă пресс-конференци ирттерчĕ.***

Пресс-конференци ĕçне республикăри тата районсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем, РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управленийĕн ĕçĕсене туса пыракан Т.Д. Минина, пенси шутласа парассипе йĕркелес тата пенси виçисене çĕнĕрен шутласа парас, пенси прависене хак парас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Т.Н. Лисицина, административлă страховани взносĕсене йĕркелес тата парăмсене шыраса илес енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ И.Н. Коннова, персонифицированнăй учета йĕркелес енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ В.Л. Минов хутшăнчĕç.

Пенси фончĕн специалисчĕсем пенсионерсен пулас пенсийĕсен виçипе çыхăннă тĕрлĕ ыйтăвĕсем çине тулли хуравсем парĕç.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

# Пирĕн яла пырса кĕнĕ çĕрте...

Оринин ял тăрăхĕнчи Тереç ялĕнче пурăнакансем хăйсен ялне пырса кĕрекен çул çумĕнчи çӳп-çапа палларĕç пулĕ-ха. Патаккасси ялне пырса кĕнĕ çĕрте те çӳп-çап миххисем йăваланса выртаççĕ. Çыннисем тата кивĕ хăма татăкĕсене те килте çунтарма ӳркеннĕ пулмалла, ял вĕçне килсе пăрахнă:

– Килтен тасатса пултăр, урамри пире пырса тивмест, – тенĕ пулмалла.

Ку вырăнтан инçех те мар çырмаллăрах вырăнта тата тепĕр çӳп-çап купи «саркаланса» выртать. Районта паянхи кун ыйтакан çӳп-çап тăкмалли полигон пур çĕртех çакăн пек тĕслĕхсем пурри килĕшӳллĕ-и вара? Тĕслĕх илме Орининсен инçе каймаллах мар вĕт. Юнашарти Москакасси ял тăрăхĕнче Муркашри çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕпе çӳп-çап турттарма килĕшӳ туса икĕ хутчен ялсем тăрăх çӳп-çап пуçтарса тухрĕç. Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕн А.С. Суриковăн та, ытти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен те çак ĕçе йĕркелессине хăвăртлатмалли, çӳлерех асăннă предприятипе килĕшӳ тума майсене çине тăрса шырамалли çинчен калать ку тĕслĕх.

Çакнашкал ӳкерчĕксем сирĕн ялсен çумĕнче те пур-и?



**Л. ПЕТРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ыйту – хурав

# Çухатнă документсене çĕнĕрен илме

***Манăн мăшăрăн паспорчĕ çук. Ăна вăл хăйне ирĕкрен хăтаричченех çухатнă. Çухатнă документсене çĕнĕрен илес тĕлĕшпе юсанмалли учрежденисенче мĕнле те пулин мерăсем йышăнаççĕ-и?***

**О.И. ПЕТРОВА.**

– Ирĕкрен хăтарнă çыннăн документсем хушшинче паспорт, ĕç кĕнеки е пенси удостоверенийĕ çук пулсан, кунпа пĕрлех паспорта улăштарма вăхăт çитнĕ пулсан та, юсанмалли учреждени администрацийĕ документсене çĕнĕрен илме мерăсем йышăнать. Çĕнĕ паспорт илме каякан тăкаксене ирĕкрен хăтарнă çыннăн лицевой счечĕнчи суммăран тытса юлаççĕ. Енчен те ирĕкрен хăтарнă çыннăн лицевой счечĕ çинче укçа-тенкĕ çук пулсан, çĕнĕ паспорт илме каякан тăкаксене патшалăх шучĕпе саплаштараççĕ.

**А. ЗОТОВ,**
**Чăваш Республикинчи юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине тĕрĕслесе тăрас енĕпе ĕçлекен Шупашкар хулин прокурорĕ.**

# «Традициллĕ мар суту-илĕве аталантаратпăр»



***Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен професси уявĕ çак сферăра ĕçлекенсене тăрăшулăха пĕр вăя пĕтĕçтерме, пурнăçланă ĕçсене вăхăтра пĕтĕмлетсе пурне те малалла пĕр тĕллевпе ĕçлеме пулăшать. Пысăк уява Муркаш райпо коллективĕ мĕнле кĕтсе илет-ха? Хурав шыраса Муркаш райпо канашĕн ертӳçипе Борис Васильевич АНДРЕЕВПА тĕл пултăм.***

**– Борис Васильевич, сирĕн урлă пĕтĕм коллектива Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕпе саламлатăп. Уяв кĕрекине савăк кăмăлпа ларма сăлтав пур-и? Мĕн палăртнисем пурте вăхăтра пурнăçланса пыраççĕ-и?**

– Кунсерен тĕллевлĕ ĕçлени пите хĕретме памасть. Професси уявне хамăр туса ирттернĕ ĕçсемшĕн пăшăрханмасăр, тунă ӳсĕмсемшĕн савăнса, малашлăх аталану çулĕсене курса кĕтсе илетпĕр. Ĕçри кăтартусем çапла тума май параççĕ. Ку вара вăл – пирĕн пĕрлехи ӳсĕм. Ăна эпир çулсерен малалла аталантаратпăр. Акă кăçалхи пĕрремĕш çур çулта та пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăшĕ иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 22,2 процент ӳсрĕ. Кун хыçĕнче çĕнĕлĕхсене алла илни, ял çыннипе çывăх тăрса ĕçлени, тавар туянакансен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшни. Ăна пурнăçлассинче вара паянхи куна райпо системинче вăй хуракан 398 ĕçченĕн тӳпи пысăк. Вĕсем кашниех хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланăран пирĕнпе тавар туянакан тата хамăр пайщиксем хушшинчи çыхăну çирĕпленсе пырать. «Райпоран шанчăклăраххи çук», – теççĕ пирĕн пулăшупа усă курнисем тата пирĕнтен пулăшу кĕтекенсем. Çавăнпа та хамăр харпăрлăхри 70 магазинта, обществăлла апатланăвăн 10 предприятийĕнче, пекарньăсенче, хатĕрлев ĕçĕнче, бухгалтеринче тата автотранспортра, хушма пулăшу ĕçĕсенче вăй хуракан ĕçченсене Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕпе чĕререн саламлатăп, малашлăхра татах та пуçаруллăрах та ăнăçуллăрах ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунатăп. Салам сăмахĕ пирĕнпе тачă çыхăну тытакан прдприятисемпе организацисем тата хамăрăн потребительсемпе пайщиксем тĕлĕшпе те.

**– Муркаш райповĕ пĕр вырăнта тăманнине, вăл тăтăш шыравра пулнине эпир сирĕн магазинсене кĕрсен те асăрхатпăр. Унти ассортимент пуянни сентресем умĕнчен халăха татмасть.**

– Çавăншăн тимлетпĕр те. Эсир пирĕн ĕçе çапла хак пани пире татах тăрăшуллăрах пулма, халăх кĕтекен çĕнĕлĕхсене ытларах çул пама хистет. Çакнашкал тĕллев малашне те пире хамăр ĕçĕн шăнăрне çирĕп тытса пыма хавхалантарать. Халăх ыйтăвĕсене шута илсе паян эпир традициллĕ мар суту-илĕве таранрах аталантарассипе тимлетпĕр. Çак çул-йĕр пире халăхпа çывăхарах пулма, унăн ыйтăвĕсене туллинрех татса пама пулăшать.

**– Ялти магазин паян суту-илӳ учрежденийĕ çеç мар, культурăпа информаци центрĕ те. Ку енĕпе çĕнĕлĕхсем пур-и тата?**

– Ял çыннин ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессине мала хурса пĕчĕк ялсенче те магазинсем тытатпăр. Унта çӳрекенсем паян районта тухса тăракан «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатпа, республикăри тата Раççейри пичет изданийĕсемпе паллашма пултараççĕ.

**– Юлашки вăхăтра эсир вырăнти производительсен продукцийĕпе анлăрах усă курма пуçлани сисĕнет.**

– Малашлăха пăхаканăн вырăнти производительсенчен уйрăлса каймалла мар. Çакна эпир ăнланатпăр, хамăр ĕçĕмĕрте усă куратпăр. Ку çула мала тăратни те пире хамăр халăхпа çывăхарах тăма, унăн ыйтăвĕсене туллинрех ăнланма пулăшать. Хамăр патăмăрти резервсене туллинрех ĕçлеттерессине мала кăларни райпо ĕçĕ-хĕлĕн экономика эффективлăхне ӳстерме май парать. Çак енпе кайса юлашки çулсенче эпир хамăр автопарка тĕпрен çĕнетрĕмĕр. Пур магазинсене те холодильниксемпе тата çĕнĕ суту-илӳ оборудованийĕпе тивĕçтертĕмĕр. Хамăр ĕçре магазинсенчи самообслуживани йĕркине анлăрах çул патăмăр. Ку йĕркепе паянхи куна райпора 6 магазин ĕçлет. Суту-илĕвĕн çак культурине эпир райцентртан кăларса ялсене çитерессипе те тимлетпĕр. Акă çур çул каялла çакнашкал магазин Нискассинче уçăлчĕ. Тавар çаврăнăш ӳсни çак утăм ял çыннишĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса пачĕ. Çак çул-йĕре пурнăça кĕртсе пырассипе ĕçсем малалла пыраççĕ. Очăкассинче, Отарккăри çăкăр пекарнинче капиталлă юсав ĕçĕсем пыраççĕ пулсан, Йӳçкассинчи «Вĕри çăкăр» магазина çĕнĕрен тăвассипе тимлетпĕр. Экономика тенĕрен, паян пирĕн никам умĕнче те пысăк парăмсем çук, пур тӳлеве те вăхăтра тӳлесе пыратпăр. Малашне те çаплах пуласса шанатпăр.

**– Традициллĕ мар суту-илӳ тесе эсир хăш енсене мала кăларатăр? Çулленех уяв умĕн сирĕнтен интервью илме тивнĕрен маншăн ку çĕнĕлĕх.**

– Каларăм-çке, эпир яланах шыравра. Çапла тума пире халăхăмăрпа çывăхарах пулма тăрăшни хистет. Çак çул çине тăни – аталанăвăмăрăн никĕсĕ. Манăн паян традициллĕ мар суту-илĕве халăхран аш-какай, сĕт, эмел курăкĕсем пуçтарассине, тавар туянакансене килти хушма хуçалăха аталантарма тырă, çĕр улмипе тĕрлĕ курăксен сортлă вăрлăхĕсене, минераллă удобренисемпе тĕрлĕ имçам кӳрсе килсе панине кĕртес килет. Çак çулпа кайса кăçалхи пĕрремĕш çур çулта çеç эпир 41 тонна аш-какай (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 229 процент), 1538 тонна сĕт (233 процент), 86 центнер çĕр улми (505 процент), çăм, полиэтилен хут, кивĕ хут, тир-сăран, эмел курăкĕ т. ыт. те пуçтартăмăр. Ку çула уçăмлатни ял çыннине килти хушма хуçалăхри ытлашши продукцие инçете çӳремесĕрех вырнаçтарма пулăшать. Эпир çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртетпĕр – ял çыннин хушма ĕç укçи çулĕ уçăлать. Хатĕрлев ĕçне анлăн туса пырса халăха эпир 16 миллион тенкĕне яхăн укçа ĕçлесе илме май патăмăр. Пирĕн тĕп тĕллев хамăр тупăш илесси çеç мар-çке. Çакна ял çынни те ăнланчĕ. Вăл паян пирĕн патăмăра шанăç шыраса пырать. Пырать те хăйне тивĕçтерекен хурав тупать.

**А. ПЕТРОВ.**

# Ӳсĕм – пĕрлехи ĕçре

***Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунне уявланă чух çулсеренех Мăн Сĕнтĕрти «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕ-хĕлĕ куç умне тухать. Çак предприятире пулса курсан тата кунти тăрăшулăхпа çывăхарах паллашсан Мăнсĕнтĕрсен çаврăнăçулăхĕнчен тĕлĕнмелли çеç юлать.***

«Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăшăн иртнĕ çул производствăна малалла аталантарнă черетлĕ çулталăк пулчĕ. Тĕллевсем пурнăçланни коллектив пĕр çын пек çичĕ хут тар юхтарса ĕçленипе пулнă. Çапла вара кунта пĕлтĕр оборудование çĕнетессипе, ĕç йĕркелĕвне лайăхлатассипе, пахалăха ӳстерессипе висĕм çул йышăннă чикĕсене парăнтарнă. Çак ĕçсене пурнăçласа тата производство технологине паянхи кун ыйтнă пек аталантарса пыракан предприятин паянхи ассортимент виçи – 160-а яхăн продукци тĕсĕ.

– Эпир кунсерен çавăн чухлĕ продукци кăларатпăр тенине пĕлтермест ку. Пирĕн ĕç потенциалĕ çавăн пек. Хамăр ĕç тытăмне рынок ыйтнă пек йĕркелесе пырса паян эпир ытларах заказсемпе ĕçлетпĕр: кам мĕн тата епле виçе ыйтать – çавна вăхăтра туса паратпăр. Ку вăл пирĕн мал туртăмлă ĕçĕн тĕп тĕллевĕ, – терĕ общество директорĕ Леонид Ильгечкин уяв ячĕпе саламланишĕн тав туса.

**А. БЕЛОВ.**



***Макарон цехĕн ĕçченĕ Ольга Крючкова ĕçри тăрăшулăхпа ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.***



***Е. Вершева, А. Блинова, Р. Лаптева, Л. Галкина пекарьсем (сулахайран сылтăмалла) предприяти аталанăвне пысăк тӳпе хываççĕ.***

**СУТУ-ИЛĔВĔН ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ĔÇТЕШĔМĔРСЕМПЕ ПАЙЩИКСЕМ!**

Чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе эпир паян сире Кооперативсен пĕтĕм тĕнчери кунĕпе саламлатпăр! Эсир Муркаш райповĕн пулăшăвĕпе анлăн усă курнине пĕлсе тăнăран тата пирĕнпе тачă çыхăнура ĕçленĕрен çак уява эпир сирĕн те тесе хаклатпăр. Çакна эсир тивĕç. Сирĕн пултарулăхăрпа ĕçченлĕхĕре пула Муркаш райповĕн ĕçĕ-хĕлĕн чапĕ район тата республика тулашне тухрĕ. Тавтапуç куншăн. Кооператори вăй-хăвачĕ – эпир сирĕнпе пĕрлешӳллĕ ĕçленинче, умра тăракан палăрăмлă тĕллевсене пĕрле пулса татса панинче, ырă пуçарусене ăруран ăрăва куçарса пынинче.

Реформăсен çăмăл мар тапхăрĕнче пайщиксемпе потребкооператори ĕçченĕсем пирĕн тытăма сыхласа хăварчĕç. Çĕнĕлĕхсене алла илсе аталану çулĕн çĕнĕ ӳсĕмĕсене парăнтарса потребкооперацие ял çыннисемпе çывăхлатнинче те сирĕн ĕçĕр малти вырăнта. Пирĕн паянхи тĕп тĕллев – традициллĕ мар суту-илĕве аталантарса ял çыннисен социаллă пурнăçне тивĕçлĕ шайра упраса хăварасси. Нумай енлĕ ĕç-хĕле аталантарса Муркаш райповĕ çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçать, ял çыннисен ытлашши продукцине туянса вырнаçтарма пулăшать, пĕчĕк ялсенче пурăнакансен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăкаклă магазинсенех малалла ĕçлеттерет. Çакна ял çынни курать. Курать те пирĕн хушăмăрти çыхăнусене çирĕплетме тăрăшать. Ял çынни пирĕнте пысăк тĕкĕ тата шанчăк курнине эпир туятпăр. Пирĕн ăна тӳрре кăлармаллах. Çакна эпир тăватпăрах.

Паян вара эпир хамăрăн хисеплĕ ветеранăмăрсемпе тăрăшуллă ĕçтешĕмĕрсене, пултаруллă пайщиксене, пирĕн ĕçĕмĕре тивĕçлипе хаклакансене ял пурнăçне, ял çыннисен кун-çулне лайăхлатассипе çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх сунатпăр. Хамăр пĕрлĕхе сыхласа хăварса ăна малалла аталантарма, пур йăла-йĕркепе пĕрле тунă ӳсĕмсене çĕнетсе пыма вăй-хал, тимлĕх, ăнăçу сунатпăр. Çакна валли пурне те сывлăх та телей пулчăр!

**Муркаш райповĕн канашĕпе правленийĕ, ветерансен канашĕ.**

# Кунта килсе эсир йăнăшмăр



*Паян тĕрлĕ уявсене, çуралнă кунсемпе юбилейсене тăвансемпе те тус-юлташсемпе пĕр кĕрекере ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Кун пек чухне районта пурăнакансемшĕн Муркаш райповĕнчи «Радуга» кафе пысăк пулăшу парайрать. Кунти илемлĕ зал, тараватлă ĕç коллективĕ – кирек камшăн та хăйне евĕр парне. «Çапла пултăрччĕ тетпĕр», – ăшшăн каларĕ 37 çул çак системăра ĕçлекен, ĕçри тăрăшулăхпа «РФ потребкооперацийĕн отличникĕ» ята илме тивĕç пулнă Тамара Ивановна Колбасова шеф-повар. Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла) малти ретре: Г. Яковлева (ĕç стажĕ 26 çул), Т. Колбасова, Е. Систейкина (34 çул); хыçалти ретре: О. Мартынова официантка (5 çул), Е. Музыкова (22 çул), О. Ильина (4 çул), Н. Колбасова (9 çул), А. Максимова (7 çул), Т. Гаврилова официантка (общепитра 11 çул). Килсе курăр – ӳкĕнмĕр!*

**А. БЕЛОВ.**

Милици хроникинчен

## «Парне» хатěр

Сĕтел çинчен кĕсье телефонне тата сумкăри укçана вăрлас тесех ют ял каччи ятарласа Муркаша каять-ши? Çĕрлехи пĕрремĕш сехетре пĕр пÿртĕн чÿрече рамине кăларса шала кĕрсе преступлени тăвать. «Тĕттĕмрен» хăрамансăр хăйĕн çуралнă кунĕ тĕлне парне пултăр тенĕ ĕнтĕ. Парни вара халĕ Уголовлă кодекспа çыхăннăскер пулать.

## Хăшĕ ăслăрах?

Иртнĕ кунсенче Мăн Токшикри пĕр килтен компьютерăн мониторĕ те, блок системи те, саббуферĕ те – пĕтĕмпех «ураланнă». Çакă компьютер çав тери «ăслă» пулнипе çыхăнман çав, кукăр алă тимленĕ кунта. Тепĕр тесен компьютер та хуçалăхри мунча çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче упраннă. Тăкаке вара пĕчĕк мар – 24582 тенкĕ. Халĕ ку тĕлĕшпе РФ Уголовлă кодексăн 158 статйин 2 пайĕпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

**Пичете шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Турăшсемпе çула тухрĕç

**Ĕненекенсен пурнăçĕнчен**



*Çанталăк шăрăх тăни, апла пулсан тухăç та начар пуласси пурне те пăшăрхантарать. Çакна шута илсех иртнĕ кунсенче Муркашри Владимир Турă Амăшĕн турăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте пуçарнипе кунта тăтăш çÿрекенсем турăшсемпе çула тухма шутларĕç. Хорнуй ялне çитме палăртнăскерсем ирхи кĕлĕ хыççăн çула тухрĕç те. Çак сăвапллă ĕçпе пĕрлех палăртнă вырăна çитсен Федор атте çумăр ыйтса та кĕлĕ ирттерчĕ.*

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Паян – ГИБДД ĕçченĕсен кунĕ**

# «Çул-йĕр пуринчен те тимлĕх ыйтать»

(Вĕçĕ. Пуçл. 2 стр.).

**– Аварисен сăлтавĕсене тишкерес пулсан?**

– Аварисен сăлтавĕсенчен пĕри – водительсем руль умне ÿсĕрле ларни. Шетмĕпуçĕнчи çамрăксем авари лексе пурнăçран уйрăлни питĕ тарăн йĕр хăварчĕ. Çав тĕслĕхре те руль умĕнче ÿсĕр водитель пулнине аса илтерес килет. Иртнĕ тапхăрта пурĕ 40 водителе асăннă сăлтава пула тытса чарнă.

Тепĕр сăлтав – пысăк хăвăртлăхпа çÿрени. Çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн 70 процентне яхăн шăпах çак сăлтава пула явап тыттармалла тунă. Анчах та ман шутпа пысăк хăвăртлăхпа çÿрекенсене паракан штраф виçисем водительсене ытлах сисĕнмеççĕ пек туйăнать. Протокол çырса, сăмахран, 100 тенкĕ штраф тÿлесси йĕркене пăсни çинчен мантарса ярать пулас. Çавăнпа та çул-йĕр çинчи йĕркене çапла майпа пăсакансем валли явап пысăкрах калăпăшлă кирлĕ тесе шутлатăп. Иртнĕ ултă уйăхра пурĕ 876 водителе ирĕк панинчен пысăкрах хăвăртлăхпа çÿренĕшĕн административлă майпа асăрхаттарнă.

Çуран çÿрекенсем ятарлă вырăнсенче çул урлă каçманни те хăйĕннех тăвать. Çулсем çинчи инкексенчен яланах асăрхаттаратпăр пулин те, пурпĕр нумайăшĕ çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмасть. Çакă вара çынсен культура шайĕ пĕчĕк пулнине те кăтартса парать.

**– Икĕ çул каялла йышăннă саккунпа килĕшÿллĕн ятарлă тĕрĕслевре водителĕн организмĕнче 0,3 промилле таран алкоголь палăрать пулсан унăн руль умне ларма юратчĕ. Халĕ вара Патшалăх Канашĕ çакна пăрахăçлассипе эрне кун çĕнĕ саккун йышăнчĕ.**

– Ман шутпа ку питĕ тĕрĕс. Организмри 0,3 промилле алкоголе акă мĕнле пăхма пулать: водитель е çур литр сăра, е 40 грамм водка, е тата пĕр бокал хĕрлĕ эрех ĕçнĕ те çула тухнă. Çĕнĕ саккун вара çак нормăна пăрахăçлаттарать. Водительсем сăлтава йÿçĕтнĕ сĕтпе е спиртпа хатĕрленĕ эмел ĕçнипе ăнлантарма пултарĕç. Анчах та алкотестер юнра спирт пуррине кăтартас пулсан водителĕн сахалтан та пĕрре ĕçнĕ чух тÿрех 3 литр квас е турăх ĕçмелле. Апла пулсан лару-тăру мĕнле пуласси пурне те паллă пулĕ тетĕп: водительсен руль умĕнче яланах урă пулмалла.

**– Пĕрремĕш медицина пулăшăвне пама кашни машинăрах аптечка пур. Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вара унти эмелсен тата медицина хатĕрĕсен пуххи улшăнчĕ. Çакăн пирки кăшт тĕплĕнрех пĕлтерсен аванччĕ.**

– Июлĕн 1-мĕшĕнчен аптечкăсене çĕнĕлле пухассине ĕçе кĕртме пуçларĕç. Малтанхи стандартлă медицина препарачĕсен пуххинчен сурансене çыхмалли хатĕрсен кăна юлаççĕ. Çул çинчи инкекре ытларахăшĕ юн нумай кайнипе вилсе каять. Çакна Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин медицина пулăшăвĕн департаментĕнче те çирĕплетеççĕ. Çапла вара малтанхи аптечкăсенчи бинт тепĕр чух пĕр çыннăн суранĕсене те çыхма çитмен. Темиçен пулсан вара? Çĕнĕ йышши аптечкăсем сутма пуçланă та ĕнтĕ.

**– Каникул вăхăчĕ çул-йĕр çинче пуринчен те татах та пысăкрах тимлĕх, асăрханулăх ыйтать. Ачасем хутшăннипе çулсем çинче ку тапхăрта миçе инкек пулчĕ-ха?**

– Ачасем хутшăннипе пурĕ пĕр инкек сиксе тухрĕ. Вĕсенче пĕр ача суранланчĕ. Çуллахи вăхăтра вара чăнах та водительсен те, ачасен хăйсен те питĕ тимлĕ пулмалла. Водительсен 12 çул тултарман ачасене машинăра ятарлă креслона лартса çеç илсе çÿреме юрать. Çакăн çине эпир пысăк тимлĕх уйăратпăр. Йĕркене пăхăнманнисен 500 тенкĕ штраф тÿлеме тивĕ. Ашшĕ-амăшне те ачисене çул-йĕр çинче хăйсене мĕнле тытмаллине аса илтерсех тăма ыйтас килет. Асăрханулăх пулмасан, çул çинчи хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмасан ĕмĕрлĕхех юлакан сурансем те пулма пултараççĕ. Çул-йĕр пуринчен те тимлĕх ыйтать.

Манăн вара самантпа усă курса хамăн ĕçтешсене паянхи професси уявĕпе саламлас килет. Ĕçре ăнăçусемпе çитĕнÿсем, çемйĕрсенче килĕшÿпе тăнăçлăх пултăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Прогноз погоды с 3 по 9 июля** www.yandex.ru

| сб 3 | вс 4 | пн 5 | вт 6 | ср 7 | чт 8 | пт 9 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность | ясно | переменная облачность | ясно | ясно | переменная облачность | ясно |
| +29 | +20 | +25 | +26 | +29 | +31 | +28 |
| +14 | +12 | +14 | +15 | +16 | +21 | +12 |

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории земли сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:17:271001:47, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:271001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 2-5.**

## Пĕлтерÿсем. Объявления

**Архитектурно-строительное проектирование, систем электро-, водо-, газоснабжения. Составление смет. Свид. СРО.**
*ООО «Интертехсервис». Моргауши, ул. Мира, 9. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76.*

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352) 52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 33-38.**

* * *

**ООО «Энергосервис» срочно требуются: водитель на ГАЗ-53, рабочие, газоэлектросварщик, главный бухгалтер. Оплата не ниже 6000 руб., сдельно-премиальная. Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

* * *

**Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07. 7-9.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-9.**

* * *

**Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 13-17.**

* * *

**Продаю кольца колодезные. Цена 1500 руб., с доставкой. Бурение колодцев. Тел.: 89876664140. 5-9.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 8-8.**

* * *

**ООО «Лотос» продает: мотоблоки, столбы для ограды диам. 60 мм тол. 5 мм – 1 пог. м. 120 руб., профнастил крашеный – 1 пог. м. 260 руб., профнастил оцинкованный – 1 пог. м. 210 руб., сетка-«рабица» от 400 руб., сахар 1 мешок (50 кг) – 1500 руб., мука 1 мешок (50 кг) – 650 руб., профиль 40х20 – 1м 50 руб. Доставка 5 руб./км. Тел.: 8-917-665-27-26. 3-5.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушское» реализует квартиры по свидетельствам ВОВ, молодым специалистам, молодым семьям, по ипотеке и т. д.**
**Приглашает на работу юриста. Тел.: 63-1-19, 69-8-59, 69-7-23. 2-2.**

* * *

**Продается двухкомнатная мебелированная квартира площадью 53 кв. м. в с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 11. Тел.: 8-927-855-96-36, 29-18-07. 2-5.**

* * *

**Ултă уйăхри хурапа шурă тĕслĕ тынашки çухалчĕ. Çамки çинче виçкĕтеслĕх шурă пур. Куракансене çак телефонпа пĕлтерме ыйтатпăр: 8-927-859-19-58.**

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды категории земли сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:17:271401:1032, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**Декабрьте виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-867-57-20, 8-927-867-57-22.**

* * *

**Декабрьте пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Якаткасси ялĕ. Тел.: 61-2-41.**

* * *

**Продаю новую квартиру 43,1 кв. м. за 980 тыс. руб. Тел.: 8-953-013-74-27.**

* * *

**Утерянный диплом В№413518 об окончании ГПТУ № 8 г. Чебоксары, выданный на имя Воронина Николая Петровича, считать недействительным.**

* * *

**Декабрьте тăваттăмĕш пăруламалли хура ĕне сутатпăр. Шупуç ялĕ. Степанов С.С.**




ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА KBE
ГЕРМАНСКОЕ КАЧЕСТВО
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
Лидер
Сроки изготовления от 3 до 5 дней
Беспроцентный кредит
Скидка до 20% / Гарантия 5 лет
от 3490 руб.
Телефон: 8-917-675-48-31, 62-3-80
г. КАНАШ, ул. Полевая, д. 20. Тел.: 4-16-19; ул. Пушкина, д. 31. Тел.: 2-25-08; ул. Железнодорожная, д. 161. Тел.: 2-19-89.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 02.07.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3871.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.